## Ман хаваслă çивĕч мечĕк

*(4–5 çулхи ачасемпе irttermelli физкультура вăййи)*

***А.Г. КОМИССАРОВА****, Элĕк районĕн Тавăтри 3-мĕш номерлĕ «Пучах» ача сачĕн воспитателĕ*

***Тĕллевсем***: ачасен сывлăхне çирĕплетесси, ӳт-пӳне тĕреклетесси; физкультурăпа спорта юратма вĕрентесси; сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарасси; туслăха аталантарасси.

***Кирлĕ хатĕрсем:*** шăхличĕ, тĕрлĕ калăпăшлă мечĕксем, ялавсем, карçинккасем.

***Асăрхаттарни***: вăййа урамра та, физкультура залĕнче те irttерме юрать.

***Кӳртĕм.***

Ачасен сывлăхне çирĕплетмелли, ӳт-пӳне тĕреклетмелли мелсенчен пĕри вăл – вăйă. Вăйă выляттарнă чух кашни ача ĕçе хутшăнать, хăш-пĕр ĕçе пĕччен мар, ытти çынсемпе туни тухăçлăрах пулнине тавçăрса илет. Вăйăсенче ачасен пĕр-пĕрне хисеплесси, пулăшасси, тантăшсене тус-тăван вырăнне хурса хакласси аталанать.

Пĕрле пухăнса выляни ачасене çителĕклĕ таран хускалма, чупма, чакаланма, сикме, мечĕке ывăта-ывăта тытма хăнăхтарать. Вăйă пуçланиччен ачасене сывлăхпа çыхăннă ваттисен сăмахĕсемпе паллаштарни те ытлашши пулас çук.

Сывлăха ялан упра, питĕ хаклă вăл тупра.

Йывăç тымарĕпе çирĕп, этем сывлăхĕпе çирĕп.

Çирĕп, вăйлă, сывлăхлă çыннăн шухăшĕсем те çирĕп, вăйлă.

Сывлăхран хакли çук.

Сывлăх пулсан пурте пур, эсĕ ырă та сатур.

### В ă й ă ю х ă м ĕ

Е р т с е   п ы р а к а н. Ачасем, эпĕ сире «Пĕчĕк спортсмен» ятлă сăвă вуласа парасшăн. Ăна Петĕр Çăлкуç поэт вырăсларан куçарнă.

Вылясам волейболла,

Иш, чупсам, эс, улăпла.

Футбола та, эс, юрат:

Кашниех кӳрет хăват.

Вирхĕн велосипедпа,

Туслашсамччĕ хоккейпа…

Пĕчĕкçĕ маттур спортсмен,

Çĕнтермешкĕн, эс, вĕрен.

Ачасем, килĕшеççĕ-и сире çак сăвăри йĕркесем? (*Ачасен хуравĕсем.*) Пĕчĕкçĕ маттур спортсмен пулас тесен мĕн тумалла-ха? (*Ачасен хуравĕсем.*) Паян пирĕн пата хаваслă мечĕк хăнана килнĕ. Мечĕк сикет, савăнать, пире выляма чĕнет. Пур вăйă-конкурса та паян мечĕксемпе ирттерĕпĕр. Анчах та малтан алă-урана вылятмашкăн-çемçетмешкĕн хусканусем туса илĕпĕр.

Пурте тӳрĕ тăрăпăр,

Хусканусем тăвăпăр,

Алăсене çĕклĕпĕр,

Çӳлтен-çӳле йăтăпăр.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă,

Пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр.

Халĕ – тепĕр хускану:

Пилĕк çинче алăсем.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă –

Сылтăма, сулахая

Çаврăнусем тăвăпăр.

Виççĕмĕш хусканура

Алă – хулпуççи çинче:

Тăрăшса çавăрттарар

Малалла та каялла.

Халĕ вара ерипен

Кĕлеткене хускатар:

Авăнатпăр тăрăшса

Сулахая, сылтăма.

Илемлĕ ту, ан васка.

Урасем çинчен ан ман,

Пĕшкĕнсе ларар хитрен.

Юлашкинчен халь вара

Мечĕк евĕр сиккелер,

Йĕри-тавра çаврăнса

Малалла та каялла.

Ачасем йăлтах каланă пек туса пыраççĕ.

Е р т с е   п ы р а к а н. Пит маттур та иккен эсир, ачасем! Хусканусене тĕрĕс те тăрăшса пурнăçланăшăн пурне те мухтатăп. Халĕ «Хăвăрт мечĕк» ятлă вăйă выльăпăр. Тимлĕ пулăр, кам патне мечĕк пырать, ăна тытса каялла ывăтса памалла.

Тĕрлĕ тĕслĕ хăвăрт мечĕк

Сикет, сикет чарăнмасăр,

Хăвăрт-хăвăрт васкаса…

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тваттă!

Тараймастăн эс пиртен.

Малалла, туссем, виçĕ ушкăна пайланмалла пулать. Сире мечĕксем парса тухатăп. Эсир, тĕсĕсене кура, «Хĕрлисем – çивĕччисем», «Саррисем – маттуррисем», «Кăваккисем – харсăррисем» командăсем йĕркелĕр. Кашни ушкăн

правилăсене пăхăнса вăй виçнине ятарлă тӳресем тĕрĕслесе тăрĕç, ăмăртусем вĕçленсессĕн çĕнтерӳçĕсене палăртĕç.

Ачасем виçĕ рете тăрса ăмăртаççĕ. Малта тăракансем – командирсем.

***«Мечĕке юнашар тăраканнине пар» вăйă.*** Ачасен мечĕке хыçалалла парса ямалла, хыçалта тăраканни патне çитсен каялла парса ярать. Хăш ретре мечĕк хăвăртрах командир патне çитет, çав ушкăн çĕнтерет.

***«Мечĕке пуç урлă хыçалта тăраканнине пар» вăйă.*** Йĕрки малтанхи евĕрлех.

***«Мечĕке ура хушшипе кăлар» вăйă***. Ачасем колоннăра урасене сарса тăраççĕ, йĕрки малтанхи евĕрлех.

Е р т с е  п ы р а к а н. Ай, маттур та эсир, ачасем! Халĕ сире тепĕр ăмăрту кĕтет. Унăн ячĕ – «Тĕл персе кĕрт». Командăсен черетпе мечĕксене карçинккана тĕл персе кĕртмелле. Хăш ушкăн нумайрах мечĕк персе кĕртет, çавă çĕнтерӳçĕ пулса тăрать.

Карçинккари мечĕксене шутласа çĕнтерӳçĕне палăртни.

Е р т с е  п ы р а к а н. Ачасем, ывăнмарăр-и? Апла пулсан сире тепĕр хаваслă вăйă кĕтет. Çак карçинккасенче пирĕн мечĕксем пăтрашăнса пĕтнĕ. Сирĕн вĕсене уйăрмалла пулать. Хăварăн ушкăн ячĕсене аса илĕр-ха. Хĕрлĕ мечĕксене «Çивĕччисем», сарă мечĕксене «Маттуррисем», кăвак мечĕксене «Харсăррисем» пуçтарĕç. Асăрхануллă, тимлĕ пулăр. Пĕр-пĕринпе ан çапăнăр. Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тытăнар!

Кĕвĕçемĕн ачасем мечĕксене тĕсĕсемпе уйăрса пуçтараççĕ. Хăш ушкăн хăвăртрах пуçтарса пĕтерет, çавă çĕнтерӳçĕ пулса тăрать.

Е р т с е  п ы р а к а н. Ну, ачасем, пăхатăп та сирĕн çине – савăнатăп. Эсир хаваслă та, вăйлă та, çивĕч те. Эсир маттуррăн ăмăртнине курса хăлхаллă мечĕксем те чăтса тăраймарĕç, сирĕнпе вылясшăн сиксе тухрĕç. Тепĕр эстафета «Сикекен мечĕксем» ятлă. Сирĕн вĕсем çине ларса палăртнă вырăна сиксе

çитмелле те каялла таврăнса хăвăрăн ушкăнри ачана памалла пулать. Хăш командăри ачасем маларах сиксе пĕтереççĕ, çавсем çĕнтереççĕ.

«Сикекен мечĕксем» ăмăртăва пĕтĕмлетни.

Е р т с е  п ы р а к а н. Халĕ, ачасем, хăлхаллă мечĕксемпе сывпуллашар та пурте пĕрле пĕр пысăк çаврана тăрар. Вăйă ячĕ – «Юлташна хăвала». Асăрхарăр пулĕ: эпир карталанса тăнă çавра варринче темиçе мечĕк. Кĕвĕ янăраса кайсан, эпир пулăшнипе мечĕксен пĕр-пĕрне «хăваламалла» пуçламалла. Тепĕр майлă каласан, пирĕн çак мечĕксене хăвăрт-хăвăрт алăран алла парса ямалла.

«Юлташна хăвала» вăйă выляни.

Е р т с е  п ы р а к а н. Пирĕн ăмăртусем вĕçленсе пыраççĕ. Кашни ушкăнрах питĕ маттур ачасем ăмăртрĕç. Пурте пĕрле карталанса тăнă чух сирĕн тимлĕхе тепре тĕрĕслесе пăхам-ха. Пĕрре, иккĕ, виççĕ! «Хаваслисем!» – тесен, çак ушкăнрисен алă çупмалла. «Вăйлисем!» – тесен, вăйлисен пĕшкĕнсе лармалла. «Çивĕччисем!» – тесен, çак ушкăнрисен урасемпе тапăртатмалла. (*Вăййа темиçе хутчен выляççĕ.*) Халĕ вара тӳресене сăмах парăпăр.

Т ӳ р е.

Пур ача та пит маттур,
Пур ача та пит хастар!
Вылярăр та ăмăртрăр,
Пĕрне-пĕри пулăшрăр.
Çĕнтерӳçи туслăх пулчĕ,
Хавхаланса кăмăл тулчĕ.
Кашнинех эп тав тăватăп,
Хисеп хучĕпе чыслатăп!

Ăмăртăва хутшăннисене «Чи çивĕччисем», «Чи хаваслисем», «Чи туслисем» номинацисенче çĕнтернĕшĕн грамотăсемпе чыслаççĕ. Аслă ушкăнри ачасем спорт ташши ташласа параççĕ.